Амăшĕ тата Ача çулталăкĕ

Ачасен пуласлăхне халлланă пурнăç

Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров Патшалăх Канашне янă "Вăхăта хакламалла, сынсемшĕн ĕçлемелле" Çырăвĕ кашни çынна тӳрремĕн пырса тивекен тата малашлăх пирки шутлама хистекен документ. Ăна Президентăмăр 2007 çула Ача çулталăкĕ тесе палăртнипе çыхăнтарсан пĕтĕмĕшле пĕлтерĕш татах та ӳсет.

Çирĕп çемье – ăнăçуллă обществăн пуçламăш утăмĕ. Унта туслăх хуçалансан, ăнăçусемпе тăнăçлăх та нумай кĕттермĕç, районпа республика тата Раççей куç умĕнчех çирĕпленĕç те аталанĕç. Хĕллехи вăрман илемĕпе, лапка-лапка çăвакан юр асамлăхĕпе киленсе туслăхпа килĕшӳ çеç пысăк ӳсĕмсем тума тата чылай йывăрлăхсене çĕнме пулăшни пирки шутласа утрăм вăрман çулĕпе.

... Кĕтнĕ кил. Шурă юр-и унта таврара е ешĕл курăк, анчах тирпейлĕх тени пурпĕрех курăнать. Акă, Анатри Панклири Маргарита Якимовнапа Василий Наумович Николаевсен килне çитсен кил хушши алăкĕ патĕнченех тирпейлĕх тытăнне кĕрсе ӳкетĕн. Халăхăмăр ăсĕпе пăхсан, тĕреклĕ хуçалăх – арçын çаврăнăçулăхĕ, тирпейлĕх вара – хĕрарăм маттурлăхĕ. Паянхи калаçура тирпейлĕхе, ялти культурăна мала кăлартăм та сăмахăм та Маргарита Якимовна пирки ытларах пулĕ. 28 çул почтальонкăра ĕçлекен чăваш хĕрарăмĕ паян 50 çул тултарни кама мĕн çинчен калатьши темелле пулĕ те, анчах...

Почтальонка. Ялта кашни сын ĕçлеме пултарайман, анчах унăн ĕçне куллен пурте кĕтекен професси.

– Почтальонкăра ĕçлесси пирки шутламан. Вăтам шкул хыççăн Вăрнарти ял хуçалăх техникумĕнче пĕлӳ илтĕм те 2 çул Йӳçкассинчи сысна фермин заведующийĕнче ĕçлерĕм. Анатри Панклине кайсен фермăсем инçеленчĕç. Унта вара ытларах ирпе-каçпа ĕçлемелле. Çавăнпа та ĕне фермине пĕрре мар чĕнсен те каймарăм. Çав вăхăтра ялти почтальонка Зоя Евдокимова кайсен тухрĕ те мана хăй вырăнне хăварчĕ. Унччен аннен почта сумкине çеç курнăскер (вăл Раккашра почтальонкăра чылай ĕçлесе), шăпа пӳрнипе хам та почтальонка пулса тăтăм, – хăйĕн патне тĕллевлĕ килнишĕн аванмарланса калаçать Маргарита Якимовна. Сăмах çумне сăмах, почтальонка пурнăçĕ тĕппипех куç умне тухрĕ.

Паян Анатри Панклипе Хурăнкассине 103 киле 140 экземпляр хаçат-журнал валеçекен Маргарита кунне 23 çухрăм çуран утнине пĕлсен пĕр тĕлĕнсе, пĕр çавăн пек маттурлăхшăн савăнса кайрăм. Паттăрлăх мар-и-ха ку? Вăл паян. Кăшт ĕлĕкреххине илсен...

20 çул каялла, кунти асфальт çул асра та пулман чух, 603 экземпляр хаçат-журналпа çĕршер çыру-телеграммăна икĕ яла вăхăтра çитерсе тăрасси çăмăл ĕç пулманнине пылчăклă ял урамĕпе утса курнă çын çеç калайрать. Маргарита вара парăнман, кашни кун Йӳçкассинчи çыхăну уйрăмне утнă: пĕр майлă пуш сумкăпа, каялла вара пăт йывăрăш çĕклемпе.

– Халĕ асфальт çул пур та Йӳçкассине автобуспа кайса килетĕп. Çулла – велосипедпа. Ĕлĕкрех вара пылчăк çăрсах утаттăмăр. Типĕ çанталăкра та велопа çӳремен. Тен, ăна илме укçи те пулман пуль: пилĕк ача ӳстернипе пĕрлех кил-сурт çавăраттăмăр, – аса илет пилĕк ача çуратса ӳстернĕшĕн медале тивĕçнĕ Маргарита Якимовна.

Хăйĕн пурнăçĕнче паянченех М. Николаева ачасене малти вырăна хурать, вĕсен аталанăвĕшĕн хăйĕнчен мĕн килнине тăвать. Чĕрĕк ĕмĕр каялла Анатри Панклипе Хурăнкассине ачасем валли 53-54 "Хатĕр пул" журнал килнĕ чух пĕр вăхăтрах "Тăван Атăл", "Здоровье", "Крестьянка", "Работница" тата ытти журналсем килсе кĕрсен, пурне те яла харăс илсе каяйман Маргарита Якимовна, ыттисене çыхăну уйрăмĕнче ырана хăварсан та ачасен журналне яла çитернех.

Çавăн чухнехи тăрăшулăха чăваш хĕрарăмĕ паян та алăран вĕçертмест. "Ял çыннисен ыйтăвĕсене тивĕçтерессишĕн ĕçлетпĕр те алă усса ларма юрамасть", – тет почтальонка паян та ял тăрăх тавар сутмалла чух хĕлле çунашка туртса утма, çулла велосипед çине кая-мала тиесе кайма тивнине ĕç пархатарлăхĕ вырăнне хурса.

– Ял çыннисем, уйрăмах пенсионерсем, килтен тухса çӳреймен пирки хăйсене кирлĕ макарон изделийĕсене, çăнăхпа тип çăва, сахăр песукĕпе канфет-пĕремĕке, шампуньпе супăне, пируса илсе килме ыйтсан, пĕрре те хирĕçлемен, кашнинех заявкăсене килне çитерсе парса. Тепĕр уйăхра тавар сутсах укçа-тенкĕ çаврăнăшĕ 10 пин тенкĕрен иртет, – çакнашкал ĕç сывлăх çине витĕм кӳнине палăртса калаçать Маргарита Якимовна.

Шутлатăн та, пĕр çеккунт та пушă вăхăт çук ял хĕрарăмĕн. Анчах вăл паянхи кунпа çеç пурăнман та, пурăнмасть те. Виçĕ хĕрпе икĕ ывăл çуратса ӳстерме, кашнинех çĕршыва юрăхлă тума, пурне те аслă пĕлӳ илтерме те паян ял çыннине çăмăл мар. Анчах çемьере килĕшӳпе туслăх хуçалансан, йывăрлăхсем иккĕмĕш вырăна куçаççĕ. Çакă Маргарита Якимовнапа Василий Наумович Николаевсен çемье тĕслĕхĕнчен те курăнать. Малиновка лесничествин лесникĕнче чĕрĕк ĕмĕр ĕçлекен Василий мăшăрне пулăшас тĕллевпе Хурăнкассине сахал почта çĕкленĕ-и? Амăшне тĕкĕ парас тесе Мария, Надя, Света, Алеша, Ваня ял тăрăх хаçат-журнал сахал йăтнă-и? Ку ыйтусем çине хуравне мăшăрĕн-амăшĕн Маргаритăн чĕри çеç пĕлет. Çапла пултăрччĕ те, унти кашни хĕлĕхех тĕкĕнер мар-ха... Паян вара ăна юбилей ячĕпе çеç саламлар.

Анатолий БЕЛОВ.

Сăн ӳкерчĕкре: Маргарита Якимовна мăшăрĕпе Василий Наумовичпа тата Мускаври патшалăх университетĕнче вĕренекен Ваньăпа.

Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

Вулăвçă ыйтăвĕ йĕрке хуралçисем иртнĕ çулхи ноябрь уйăхĕнче Турай ял тăрăхĕнчи Çарançырми ялĕнче спирт сутакана тытса чарнипе сăлтавланни сисĕнет. Чăнах та, кунашкал тĕслĕх пулнăччĕ, хуларан яла тырă хывăхĕ сутма килнĕ хула çынни хăйĕн интересĕсене мала хурса пĕрле пилĕк литрлă полиэтилен канистрсенчи спиртлă алкоголь продукцине – "Йăлари нумай функциллĕ хатĕр" этикеткăллă таса шĕвеклĕ, этил спирт шăршиллĕ, кĕленче тĕпне вĕтĕ хутăш ларнă шĕвеке – ултă кĕленче илсе килнĕ. Тĕрĕслев çакна та кăтартрĕ: спиртлă çак шĕвекре денатурат тăвакан диэтилфталат хутăш пур тата вăл "Апат-çимĕç чĕр таварĕнчен ректификациленĕ этил спирчĕ" ГОСТ требованийĕсене тивĕçтермест. Асăннă тĕслĕхре Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 238-мĕш статйин 1-мĕш пайĕнче пăхнă преступление кăтартакан сăлтавсем пурринех пăхса И. гражданин тĕлĕшпе уголовнăй ĕç пуçартăмăр. Кунта хаçат вулакансене лару-тăру епле ataланса пыни интереслĕ пулмалла. Преступлени тăвакан арçын йĕрке хуралçисене калаçа панинчен:

–Иртнĕ çулхи ноябрьте Шупашкарти пĕр предприниматель патĕнче тырă хывăхĕпе çăнăх сутассипе ĕçлерĕм. Ĕçе кура тăтăшах районсем тăрăх тухса çӳреме тиветчĕ. Турай ял тăрăхĕнчи Çарançырми ялĕнче пĕрре мар пултăм. Пĕррехинче эпĕ сутă тунă çĕре пĕр арçын пырса эрех-сăра пирки калаçу пуçарса ячĕ. Сăмахланă май эпĕ хайхискерне 5 литрлă пластик кĕленчери спиртлă шĕвек кирлĕ иккенне ăнлантăм. Илсе килсе парсан спирчĕшĕн те, çул укçишĕн те тӳлеме пулни пирки пĕлтерчĕ. Ку спирт хайхискерне хăйне ĕçме те, хуçалăхри ĕçсене туса пулăшакансене хăналама кирли те куç умне тухрĕ. Çын çине тăрсах ыйтнине тивĕçтерме Шупашкарта палламан арçынсенчен 220 тенкĕ тăракан 5 литрлă пластик кĕленчери спиртлă шĕвеке ултă кĕленче туянтăм та ялалла çул тытрăм. Çарançырминче каç еннелле пĕлĕшĕм ман патăма пычĕ те хак пирки ыйтрĕ. Пĕр кĕленчене 250 тенкĕпе сутса, ыттисене каялла килте техника тĕлĕшпе усă курма тесе тырă хывăхне сутса пĕтернĕ май киле пуçтарăнсан, ялтан тухнă çĕрте манăн машинăна милици сотрудникĕсем чарса тĕрĕслерĕç. Вĕсен куçĕ умне спирт пур шĕвеклĕ 5 литрлă 5 кĕленче тухса выртсан, мана вĕсем районти шалти ĕçсен пайне илсе кайса протокол çырса свидетельсем умĕнчех вăл суя эрехсене конфискацилерĕç. Спиртлă ку шĕвеке ĕçме юраманнине эпĕ пĕлсе. Çавăнпа тепĕр 5 кĕленчине техникăлла тĕллевпе усă курма шутласа.

"Йӳнни йӳнеçтерет те хакли хакне кăларать", – тет халăхăмăр ăсĕ. Спиртлă ĕçме юраман шĕвеке хамăр алăпах йӳнĕ хак парса илсех сывлăхăмăра сиенлесен, Раççей Федерацийĕн Президенчĕ сывлăха хӳтĕлеме çул паракан наци проекчĕсем те пирĕн пурнăç тĕкки пулайрас çук.

САККУН ВĂЛ ПУРИНШĔН ТЕ ПĔРРЕ

Паянхи рубрикăна район прокуратурин аслă следовательĕ, 3-мĕш класлă юрист Михаил Николаевич Тарасов ертсе пырать

Суя эрехĕн хакĕ пысăк

Пĕлтĕрхи ноябрь уйăхĕнче Çарançырминче спирт сутакан арçынна тытнă терĕç. Мĕнле айăпларĕç-ши ăна тата кунашкал тĕслĕхсем район территорийĕнче татах пурши, йĕрке хуралçисен кашнинех ответ тыттарма хевте çитет-ши?

Милиционерсем çине алă çĕкленĕшĕн

Çынна хĕнени саккуна хирĕçле пулăм пулни пирки пĕлетпĕр-ха. Милици сотрудникĕсем çине алă çĕкленĕ тĕслĕхсем районта пур-и тата вĕсемшĕн айăплисене мĕнле яваплăх кĕтет?

С. ВАЛЕНТИНОВ.

Саккуна пăсас çул çине тăнисемшĕн тинĕс те мăй таран çеç пулас. Кунта паян манăн "харсăр ачасем" районти шалти ĕçсен пайĕн ĕçченĕсем çине вĕсем служба тивĕçне пурнăçланă чух алă çĕклени çинче чарăнса тăрас килет.

2007 çулхи январĕн 19-мĕшĕ. 17 сехет те 30 минутра участкори милици уполномоченнăйĕнчен, обществăлла йĕркелĕх хуралĕнче талăк службăра тăракан аслă сержантпа çак службăри милици старшининчен тăракан оперативлă ушкăн йĕрке пăснă тĕслĕх пирки телефонпа шăнкăравласа пĕлтерсен, вырăна тухса "Визит" магазин патĕнчен киккирикĕсене самай хĕртнĕ виçĕ çамрăк арçынна шалти ĕçсен пайне илсе ситереççĕ. Аслă сержант хăйĕн çине административлă право йĕркине пăсни пирки протокол çырма пуçласан пĕр çамрăк власть представительне сывлăх енчен сиен кӳрес тесех аллипе сулкалашма пуçлать, йĕрке хуралçине форма çи-пуçĕнчен ярса тытать те сулахай хул пуççи çинчи пакунăн паллисене хăйпăтса илет. Кунпа пĕрлех çак вăхăтра хăйсем умĕнчи çынсем право йĕркин хуралĕсем пулнине пĕлсех виçĕ паттăр вĕсем служба тивĕçĕсене пурнăçланине пăхмасăрах вĕсен милици тивĕçне варалас тĕллевпе шалти ĕçсен пайĕн çуртĕнче пулнă çынсемпе ытти милици сотрудникĕсем умĕнчех хайхискерсене усал сăмахсем кăшкăрса каласа, алăсемпе темĕн туса кăтартса чысĕсене вараласçĕ, урамра курсан машинăпа таптаса вĕлерессипе хăратасçĕ.

Çавăн чух киккирик хĕртнĕ çамрăксем хăйсем тĕрĕс мар тунине паян ăнланасçĕ пулсан та, вĕсен саккун умĕнче ответ тытмаллах пулать: виçсĕшĕн пирки те район прокуратури уголовнăй ĕç пуçарнă.

Çул çитмен пулсан та

Çын пурнăçне татакансем хушшинче çул çитмен çамрăксем пур-и?

И.ВАСИЛЬЕВ, 8-мĕш класра вĕренекен.

Ку вăл мухтанмалли пулăм мар – общество инкекĕ. Анчах практикăра кун пеккине те тĕл пулма пулать. Çул уçаканĕ вара кунта та эрех. Акă, пĕлтĕрхи декабрĕн 13-мĕшĕнче Кĕртекассинчи К-сен килĕнче 1989 çулхи октябрĕн 22-мĕшĕнче çуралнă А. çамрăк эрех ĕçсе усĕрĕлнĕ хыççăн çапăçу пуçлать. К-на юриех йывăр сиен кӳрес тесе алăпа, урапа кĕлеткен тĕрлĕ пайĕсенчен тапса-çапса пĕтерет, сывлăха питĕ йывăр сиен кӳрекен сурансем тăвать. Инкек тӳсекен вырăнтах вилсе каять. Васкассинче пурăнакан А. тĕлĕшпе çийĕнчех уголовнăй ĕç пуçартăмăр. Ĕнер ăна район судне ятăмăр.

Вулакан пултарулăхĕ

Кăмпа мыскари

Ачасен кĕçех шкула кайма вăхăт çитет, çумăр вара çавçавах юхтарать. Тамара кантăкран пăхса илнĕ май шухăшлать: «Епле-ха капла пылчăкра анне илсе панă сандалипе шкула кайăн?» Ара, вăл куллен тăхăнса пăхать-çке çĕнĕскерне. Урамра вара шыв юхать, кайăксем те вĕçмеççĕ, кăвакалсем çеç хаваслă, вĕсем урамра шыв кӳлленчĕкĕсенче хăйсен сарă та лаптака сăмсисемпе темĕн шыраççĕ.

Çапах та хушăран хура пĕлĕтсем сирĕлеççĕ те кăвак тӳпе ал лаппи пысăкăш курăнса каять.

– Çумăр чарăнма хăтланассăн-и çак, - текелет хĕр ачана лăплантарма пикеннĕ амăшĕ. Миçе хутчен ĕнтĕ Тамара ăна шкула каймалли çи-пуçне тăхăнса кăтартнă, урайĕнче кайла-майла уткаланă. Çавăнпа та шкул сукмакне тахçанах манма ĕлкĕрнĕскер, хĕр ача çине пăхса пĕрле кулянать. Урайĕнче мăрлатса выртакан çăмламас кушак çеç ăнланаймасть çаксене. Кил хуçи хĕрарăмĕ ахаль ларасран кĕнчеле тытрĕ, алăри йĕке вĕлтĕр-вĕлтĕр çаврăнчĕ. Акă çакна çăмламас мăр-мăр куç хыврĕ.

Пӳртре ларакансем сисмерĕç те, кӳршĕри Верук, Тамарăпа пĕр класра вĕренекенскер, пӳрте кĕрсе тăчĕ. «Анне кăмпана каятăп терĕ, эсир пымастăр-и? - тесе пӳрте янратса ячĕ вăл. Ахальтен каламан иккен сасси йĕс шăнкăрав пекех тесе. Шкулта та хитре юрлать вăл, çавăнпа та юрă кружокне çӳрет. Унăн сарă кăтра çӳçĕ, кăн-кăвак куçĕ тӳпери хĕвеле аса илтерет. Паллах, амăшĕ хирĕçлемерĕ, Тамарăна кăмпана кайма ирĕк пачĕ. Акă, вăрмана каякансем хатĕр те.

Чĕвĕлти чĕкеç чĕлхиллĕ икĕ тантăш Марье аппа хыççăн шăкăлтатса пыраççĕ. Мĕнле кăмпасем тухнă халь вăрманта, çынсем кăмпана кайнă-и тата нумай ыйту парса тултарчĕç икĕ хĕр ача. Марье аппа хуравласа çеç ĕлкĕр вĕсене.

Çынсем çумăра пăхмасăр вăрмантан тулли витресемпе тухаççĕ, хăйсем вара йĕп-йĕпе. Шурă кăрăç катаранах курăнать. Вăрманта çынсем ытлах курăнмарĕç, тен, çумăртан хăранă, тен, шаларах кĕрсе кайнă.

Акă, Марье аппан витрине шурă кăрăçсем вырнаçма та ĕлкĕрчĕç. Маттур хĕр ачасем те унран юлмаççĕ. Шурă шлепкеллĕскерсем куç хĕссех астараççĕ тейĕн, хăйсенчен вĕçертесшĕн те мар. Таçта аякра Верук амăшĕн сасси илтĕнчĕ. Хĕр ачасем сасă еннелле утрĕç. Акă, пушă эрех кĕленчи, консерва банки, хаçат чĕрĕкĕсем сапаланса выртаççĕ. Çынсем каннă вырăна çитсе тухнă иккен кăмпаçăсем. Кăвайт чĕртнĕ вырăнĕ те, хăрăк турат купи те кунтах сарăлса выртаççĕ. Ах, епле тирпейсĕрскерсем каннă иккен. Кăвайт чĕртнĕ чух тăпран тутлăхлă сийне аяккалла илсе хумаллине, сӳннĕ хыççăн каялла майлаштарса хăвармаллине пачах пĕлмен пулас канакансем. Апла вĕсене çут çанталăк сăтăрçисем теме те пулать. Çавăн пекех кунта кантăк ванчăкĕсем те питĕ нумай. Кĕтмен ӳкерчĕк çамрăк кăмпаçăсене пачах тĕлĕнтерсе ячĕ. Вĕсем кăвайт чĕртнĕ вырăна тирпейлесе пуçтарса хăварчĕç те малалла утрĕç.

Шурă шлепкеллĕ кăрăçсем витре туллиех пулчĕç, пуçри тутăрсем те питĕ вырăнлă пулчĕç илемлĕ кăмпасем валли. Илĕртӳллĕскерсем, малтан мала астараççĕ. Вăрмана вара тĕксĕм тĕс çапма пуçларĕ. Марье аппа урăх еннелле сулăннă пулас. Ывăннă Верук кăткă тĕмми патнерех ларнă, ак тамаша, хайхискерсем çыртма пикеннĕ. Икĕ тантăш патнерех пырса тăрса сăнама тытăнчĕç. Пĕрисем улăм пĕрчине тытнă та çӳлелле сĕтĕреççĕ. Теприсем симĕс хурта пур енчен те хупăрласа илнĕ. Хурт авкаланать, хуçкаланать, анчах та кăткăсенчен тараймасть. «5-6 кăткă тĕмми пулсассăн пĕр гектар çинче, хуртсем вăрмана сиен кӳреймеççĕ», - терĕ Тамара.

Вăрман тĕкĕмленнĕçемĕн тĕкĕмленет, йывăç тăррисем кашлама, авкаланма пуçларĕç. Туссем тулли витрисене йăтрĕç те каялла çул тытрĕç тутăр çыххисем патне. Ак тамаша, тупăнаймарĕç. Хура каш-каш вăрман чуна çӳçентерет, шиклентерет. Иккĕшĕн те сăнĕсем кичем, куçĕсем шанчăка çухатнă, урасем те аранаран пускаланаççĕ. Пуçра вара киле çитес шухăш çеç. «Ӳх-ӳх-ӳх!» - илтĕнчĕ пуç тăрринчех. Тăмана та, ав, каç пуласса систерет. Вăрманта çухалса кайсассăн, калушсене кутăнла тăхăнмалла, вара çул çине тухатăн, тенине аса илчĕ Верук. Унăн уринче атă мар, калуш, çавăнпа та вăл тăхăнчĕ. Вăт, мур илесшĕ, утма питĕ кансĕр капла кутăнскерпе. Хĕр ачасем çул шыраса хăшкăлчĕç ĕнтĕ. Ура айĕнчи туратсем утма чăрмантараççĕ, Верук темиçе хут такăнса кайрĕ, аллисене те шăйăрттарса пĕтерчĕ. Çапах та киле çитмелле, çавăнпа та чăтать Верук. Тамара вара нимĕн те чĕнмест, вăл çемçе чунлă.

Икĕ юлташ тунката çине вырнаçса ларчĕç. Сивĕ, вăрман кашлать. Вĕсем хăраççĕ пулин те, пĕр-пĕрне шарламаççĕ. Камăн-ха хăравçă пек курăнас килтĕр. Ак, кĕтмен çĕртен чăшăл-чăшăл турĕ çумрах. Юнашарах чалăш куç сикет иккен, алă тăссан çитме пулать. Ачашласа пăхас килчĕ Тамарăн чалăш куçа, ачнах тарасран хăрарĕ. Темĕн хыпать те урипе тутине тĕксе чăмлать. Чылайччен çапла чăмларĕ. Верук чăтаймарĕ, кулса ячĕ. Мулкач, сасăран хăранăскер, шалалла чăмрĕ.

Кăмпаçăсем чĕнмесĕрех лараççĕ, ыйхă та пусма пуçларĕ. Верук Тамара çине пуçне хучĕ те тĕлĕрсе кайрĕ. Нумаях та вăхăт иртмерĕ, кĕрлекен сасă вăрмана янăратрĕ. Трактор çутатса вĕсем çинеллех килет иккен. Хайхискерсем тунката çинчен тăчĕç те вăл сывхарса çитессе чăтăмсăрăн кĕтрĕç. Вутă тиенĕ трактор таврана çап-çутă турĕ. Акă, пысăк савăнăç! Микулай пичче иккен. «Эпир çĕтсе кайрăмăр!» - терĕ те Верук, макăрса ячĕ. Те савăнăç куçсулĕ пулчĕ ку, те хăрани çиеле çĕнтерсе тухрĕ. Тинех чунĕсем лăш пулнăскерсем, кăмпасене çĕклесе кабинăна кĕрсе ларчĕç. Кăмпаçăсен çул çине тухасси çур метр кăна юлнă пулнă.

Ыйхă та вĕçсе кайрĕ Верукăн. Вăл чĕвĕлти чĕлхипе вăрманта мĕн курнине йăлтах Микулай пиччене каласа пачĕ. Тамара вара пит салху. Ара, тутăрпа çыхса хунă кăмпасем пирки шутлать-çке вăл. Вĕсемшĕн вара кулянмалла та мар иккен. Вĕсене Микулай пичче тупнă, вутă тиенĕ хушăра кăмпана кĕнĕ пулнă. Ачасем хаваслансах кайрĕç.

– Тамара, куртăн-и, калуш каялла тăхăнман пулсан, эпир çĕтсех каяттăмăрччĕ. Ав, кăшт çеç утмалла пулнă, халиччен киле çитеттĕмĕр, - чарăнмарĕ Верук. Ăшă кабинăра кăмпаçăсем çывăрсах кайрĕç.

Хĕр ачасем, паллах, хытă шикленчĕç вăрманта. Анчах та вĕсем çут çанталăкпа тĕплĕнрех паллашрĕç. Чалăш куç хăтланăвĕ, ĕçчен кăткăсен хăйне евĕрлĕхĕ тата ытти пулăмсем хавхалантарчĕç вĕсене. Ав, калуша мĕнле тăхăнмаллине, кăвайт чĕртнĕ чухне мĕн тумаллине те аван чухлаççĕ чăн-чăн çут çанталăк тусĕсем.

Е. НИКОЛАЕВА.

Сосновка ялĕ.